26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1943
ФЕВРАЛЬ
4
КĔÇНЕРНИКУН
27(6264) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Сталинград районĕнче хупăрласа илнĕ нимĕçсен фашистла войскисене пĕтерсе тăкас ĕçе пирĕн войскăсем пĕтĕмĕшпех вĕçленĕ

Паян Дон фронтĕнчи войскăсем Сталинград районĕнче хупăрласа илнĕ нимĕçсен фашистла войскисене пĕтерсе тăкас ĕçе пĕтĕмĕшпех вĕçлерĕç.

Пирĕн войскăсем Сталинградран çурçĕртерехре хупăрласа илнĕ противник хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă, вара противникăн хĕçпăшала пăрахмалла пулнă. Противникăн Сталинград районĕнче хирĕç тăмалли юлашки вучахне пĕтерсе тăкнă. 1943 çулти февралĕн 2-мĕшĕнче Сталинград патĕнчи историллĕ çапăçу пирĕн войскăсем пĕтĕмĕшпех çĕнтернипе вĕçленчĕ.

Юлашки икĕ кун хушшинче тыткăна илнисен хисепĕ 45.000 çын чухлĕ ӳснĕ, январĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа февралĕн 2-мĕшне çити пынă çапăçусенче вара пирĕн войскăсем пĕтĕмпе нимĕçсен 91.000 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Февралĕн 2-мĕшĕнче пирĕн войскăсем 11-мĕш армейски корпусăн командирне, Сталинградран çурçĕртерехре хупăрласа илнĕ нимĕç войскисен группин командующине—ШТРЕККЕР генерал-лейтенанта, унăн штабĕн начальникне, генштаб полковникне ГЕЛЬМУТ РОССКУРТА тыткăна илнĕ.

Кунсăр пуçне, февралĕн 1-мĕшĕпе 2-мĕшĕнче нимĕç çарĕн çак генералĕсене тыткăна илнĕ: 1) 8-мĕш армейски корпусăн командирĕ генерал-полковник ВАЛЬТЕР ГЕЙТЦ, 2) 76-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ генерал-лейтенант фон РОДЕНБУРГ, 3) 113-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ генерал-лейтенант фон ЗИКСТ АРМИН, 4) 24-мĕш танковăй дивизин командирĕ генерал-лейтенант фон ЛЕНСКИ, 5) 389-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ генерал-майор МАРТИН ЛЯТМАН, 6) Сталинградăн вăтаçĕрĕнчен хĕвеланăçнерехре хупăрласа илнĕ нимĕç войскисен группин командующийĕ генерал-майор РАСКЕ, 7) генерал-майор МАГНОС.

Çавăн пекех тата ПАУЛЮС генерал-фельдмаршалăн личнăй адьютантне АДАМ полковника, 14-мĕш танковăй дивизин командирне ЛЮДВИГ полковника, 100-мĕш пехотнăй дивизири 227-мĕш пехотнăй полкăн командирне ФРАНЦ НАЙБЕККЕР полковника, 2-мĕш минометнăй полкăн командирне ФРИДРИХ НАЙЕР полковника, 29-мĕш мотодивизири 29-мĕш артиллерийски полкăн командирне ГЮНТЕР КРАГ полковника, 8-мĕш армейски корпусăн штаб начальникне ШНИТЦЕР полковника, румынсен 1-мĕш кавалерийски дивизин артиллери начальникне МАЛЬТОПОЛЬ полковника, 8-мĕш армейски корпусри 13-мĕш сапернăй полкăн командирне ШИЛЛЕНГ полковника, 77-мĕш пехотнăй полкăн штаб начальникне БЕЛОГУЛАТ полковника, çыхăнăвăн 48-мĕш уйрăм полкĕн командирне КАРЕНЕЦКИЙ полковника, 376-мĕш пехотнăй дивизири 51-мĕш артиллерийски полкăн командирне ШВАРЦ полковника, 44-мĕш пехотнăй дивизири 134-мĕш пехотнăй полкăн командирне БОЙЕ полковника, 376-мĕш артиллерийски полкăн командирне ФУР полковника, 376-мĕш пехотнăй дивизири 576-мĕш пехотнăй полкăн командирне ШИТЕЗЕНФ полковника, 37-мĕш артиллерийски полкăн командирне ВОЛЬТ полковника, 44-мĕш пехотнăй дивизири 134-мĕш артиллерийски полкăн командирне БОСАРТУР полковника, 376-мĕш пехотнăй дивизири 536-мĕш пехотнăй полкăн командирне ШЛЕЗИНГЕР полковника, 627-мĕш артиллерийски полкĕн командирне БЕРЕНЕК полковника, 767-мĕш пехотнăй полкăн командирне ШТЕЙДЛЕ полковника, 14-мĕш танковăй дивизин штаб начальникне фон ВОЛЬТ полковника, 76-мĕш пехотнăй дивизин штаб начальникне БРИДКУЛЬТ полковника, 54-мĕш пехотнăй полкăн командирне ЛЕБЕР полковника, врача КАЙЗЕР полковника, 297-мĕш пехотнăй дивизири 523-мĕш пехотнăй полкăн командирне ГАНС ЛИБАУ полковника тата ыттисене те нумайĕшне тыткăна илнĕ.

Пирĕн войскăсем Сталинград патĕнчи çапăçусенче пĕтĕмпе 24 генерала тата 2.500 ытла офицера тыткăна илнĕ.

Противникăн хупăрласа илнĕ войскисене хирĕç генеральнăй наступлени тума пуçланăранпа, январĕн 10-мĕшĕнчен тытăнса февралĕн 2-мĕшне çити, туллимар даннăйсем тăрăх, пирĕн войскăсем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: самолетсем—750, танксем—1.550, орудисем—6.700, минометсем—1.462, пулеметсем—8.135, винтовкăсем—90.000, автомашинăсем—61.102, мотоциклсем—7.369, тягачсем, тракторсем тата транспортерсем—480, радиостанцисем—320, бронепоездсем—3, паровозсем—56, вагонсем—1.125, боеприпассемпе хĕçпăшалсен склачĕсем—235 тата ытти çар пурлăхĕсем нумай тытса илнĕ. Трофейăсене шута илес ĕç малалла пырать.

Вăрçăсен историнчи чи пысăк çапăçусенчен пĕри çакăн пек вĕçленчĕ ĕнтĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Дон фрончĕн штабĕ, 1943-мĕш çулхи февралĕн 2-мĕшĕ, 18.30

Мускав,

ССР СОЮЗĔН ХĔÇПĂШАЛЛĂ ВĂЙĔСЕН ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИНЕ СТАЛИН ЮЛТАША

0079/ОП номерлĕ боевой донесени

Сирĕн приказăра пурнăçа кĕртсе, Дон фронтĕнчи войскăсем 1943 çулхи февралĕн 2-мĕшĕнче, 16 сехет те 00 минутăра СТАЛИНГРАД ПАТĔНЧЕ ÇАВĂРСА ИЛНĔ ПРОТИВНИК ГРУППИРОВКИНЕ ÇАПСА АРКАТАС ТАТА ПĔТЕРСЕ ТĂКАС ĔÇЕ ВĔÇЛЕРĔÇ.

Çаксене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă тата вĕсен пĕр пайне тыткăна илнĕ: 11-мĕш армейски корпуса, 8-мĕш армейски корпуса, 14-мĕш танковăй корпуса, 51-мĕш армейски корпуса, 4-мĕш армейски корпуса, 48-мĕш танковăй корпуса—пĕтĕмпе 22 дивизие: 44-мĕш, 71-мĕш, 76-мĕш, 79-мĕш, 94-мĕш, 100-мĕш çăмăл, 113-мĕш, 376-мĕш, 295-мĕш, 297-мĕш, 305-мĕш, 371-мĕш, 384-мĕш, 389-мĕш пехотнăй дивизисене, 3-мĕш, 29-мĕш тата 60-мĕш моторизованнăй дивизисене; нимĕçсен 14-мĕш, 16-мĕш тата 24-мĕш танковăй дивизийĕсене; румынсен 1-мĕш кавалерийски тата 20-мĕш пехотнăй дивизийĕсене.

Кунсăр пуçне, вăйлатма янă çак чаçсене пĕтерсе тăкнă:

а) РГК-н 42-мĕш, 44-мĕш, 46-мĕш, 59-мĕш, 61-мĕш, 65-мĕш, 72-мĕш артиллери полкĕсене; РГК-н 197 АП, 13-мĕш, 639-мĕш, 733-мĕш, 856-мĕш, 855-мĕш, 861-мĕш артиллери дивизионĕсене; штурмлакан орудисен 243-мĕш дивизионне; РГК-н ултă кĕпçеллĕ миномётлă 2-мĕш тата 51-мĕш минометнăй полкĕсене; тĕрлĕ полксен 9-мĕш, 12-мĕш 25-мĕш, 30-мĕш, 37-мĕш, 91-мĕш зенитнăй дивизионĕсене, çак полксен уйрăм чаçĕсем ытти фронтсенче кĕрешеççĕ.

б) 4-мĕш, 71-мĕш, 294-мĕш, 336-мĕш, 652-мĕш, 672-мĕш, 685-мĕш, 501-мĕш уйрăм сапернăй батальонсене тата номерсĕр пĕр уйрăм сапернăй батальона.

в) 21-мĕш, 40-мĕш, 540-мĕш, 539-мĕш уйрăм строительнăй батальонсене.

г) çыхăнăвăн 6-мĕш полкне тата 594-мĕш полкне пуль тесе шутлатпăр.

д) артиллерин инструментальнăй разъедкин (АИР-н) 7-мĕш тата 28-мĕш дивизионĕсене.

е) кĕперсем тăвакан нумай коло ннăсене тата пулăшса тăракан ытти чаçсене те.

91.000 çынна ытла тыткăна илнĕ, вĕсем хушшинче 2.500 ытла офицер тата 24 генерал пур, генералсем хушшинче генерал-фельдмаршал—1, генерал-полковниксем—2, ытти сем вара генерал-лейтенантсемпе генерал-майорсем.

Противникăн çавăрса илнĕ войск исене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă пирки халь Сталинград хулинче тата Сталинград районĕнче боевой ĕçсем чарăнса ларнă.

Трофейăсене шута илеççĕ.

Верховный Главнокомандовани Ставкин Представителĕ артиллери маршалĕ ВОРОНОВ

Дон фронтĕнчи войскăсен командующийĕ генерал-полковник РОКОССОВСКИЙ

Дон фрончĕн çар совечĕн членĕ генерал-майор ТЕЛЕГИН.

Дон фрончĕн штабĕн начальникĕ генерал-лейтенант МАЛИНИН.

Верховный Главнокомандующи Дон фронтĕнчи войскăсене панă

ПРИКАЗ

Дон фрончĕ

Верховный Главнокомандовани Ставкин Представительне артиллери маршалне ВОРОНОВ юлташа

Дон фронтĕнчи войскăсен командующине генерал-полковника РОКОССОВСКИЕ

Сталинград патĕнче çавăрса илнĕ тăшман войскисене пĕтерсе тăкас ĕçе ăнăçлăн вĕçленĕ май Сире, Дон фронтĕнчи войскăсене саламлатăп.

Дон фронтĕнчи мĕнпур боецсемпе командирсене тата политработниксене боевой ĕçсене питех те лайăх тунăшăн тав тăватăп.

Верховный Главнокомандующи СТАЛИН.

Мускав, Кремль. 1943-мĕш çулхи февралĕн 2-мĕшĕ.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Пирĕн войскăсем Красный Лиман, Кущевская хулисене, Купянск ятлă чугунçул узелне тата Золотухино, Возы ятлă чугунçул станцисене тытса илнĕ

Февралĕн 3-мĕшĕнче Курскран çурçĕртерехри районра пирĕн войскăсем ЗОЛОТУХИНО тата ВОЗЫ ятлă чугунçул станцисене йышăнса илнĕ, çапла вара КУРСКПА ОРЕЛ хушшинчи чугунçул линине татнă.

Украинăра пирĕн войскăсем КРАСНЫЙ ЛИМАН хулипе пысăк чугунçул узелне, çавăн пекех тата КУПЯНСК ятлă чугунçул узелне тытса илнĕ.

Дон-çинчи-Ростовран кăнтăртарахра пирĕн войскăсем вăйлă наступлени тунă хыççăн КУЩЕВСКАЯ хулипе пысăк чугунçул узелне тытса илнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

„Отечественнăй вăрçă партизанне" ятлă пĕрремĕш тата иккĕмĕш степеньлĕ медаль тăвасси çинчен

Отечественнăй вăрçă партизанĕсене, тылра нимĕç захватчикĕсене хирĕç туса пыракан партизанла кĕрешӳре уйрăмах палăрнăскерсене, наградăлас шутпа СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ çапла тума ЙЫШĂНАТЬ:

1. «Отечественнăй вăрçă партизанне» ятлă пĕрремĕш тата иккĕмĕш степеньлĕ медаль тăвас.

2. «Отечественнăй вăрçă партизанне» ятлă пĕрремĕш тата иккĕмĕш степеньлĕ медаль çинчен калакан положение çирĕплетес.

3. «Отечественнăй вăрçă партизанне» ятлă пĕрремĕш тата иккĕмĕш степеньлĕ медаль çинчен кăтартса çырнине çирĕплетес.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1943 çулхи февралĕн 2-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 2-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Дон фронтĕнчи войскăсем Сталинград районĕнче çавăрса илнĕ нимĕçсен фашистла войскисене пĕтерсе тăкас ĕçе пĕтĕмĕшпех вĕçлерĕç.

Февралĕн 2-мĕшĕнче Сталинградран çурçĕртерехри районра тăшманăн хирĕç тăракан юлашки пунктне аркатса тăкнă. Сталинград патĕнчи историллĕ çапăçу пирĕн войскăсем пĕтĕмпех çĕнтернипе вĕçленнĕ.

Сватово районĕнче пирĕн войскăсем Покровское тата Нижняя Дуванка ятлă район центрĕсене тытса илнĕ.

Тихорецк районĕнче пирĕн войскăсем малалла тапăнса пырса, Павловская, Ново-Леушковская, Кореновская ятлă район центрĕсене тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступленилле çапăçусем туса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн карапсем тăшманăн 12.000 тонна водоизмещенилле транспортне путарнă.

* * *

Февралĕн 1-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 5 батарейине пусарса лартнă, тăшманăн пехотине икĕ батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнчи войскăсем, гитлеровецсен контратакисене сирсе пырса, малалла кайнă. Н-ски соединенин боецĕсем тăшмана халăх пурăнакан темиçе пунктран хĕссе кăларнă, ăна пысăк çухатусем тӳстернĕ. Халăх пурăнакан пĕр пунктăн районĕнче кăна нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 300 ытла вилли выртнине шутласа кăларнă. Тепĕр участокра тăшманăн пехотипе танкĕсем, хăйсен çухатнă позицийĕсене каялла тавăрас тесе, икĕ хут контратака тунă. Çав çапăçура нимĕçсен 4 танкĕ пĕтнĕ. Нимĕçсем вара пĕр ăнăçу та тăваймасăрах каялла чакнă.

* * *

Сватово районĕнче пирĕн войскăсем ăнăçлăн наступленилле операцисем тунă. Халăх пурăнакан пĕр пунктшăн пынă çапăçусенче пирĕн чаçсем нимĕçсен 28 танкне, 22 орудине тата нумай автомашинине пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 4 самолетне персе ӳкернĕ. 6 полевой оруди, хăй тĕллĕн çӳрекен 3 тупă, 35 автомашина тата боеприпассен 2 складне тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн танкистсем 200 нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, 120 çынна тыткăна илнĕ. 2 танк, грузсем тиенĕ 10 автомашина тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Воронежран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем ăнăçлăн малалла куçса пынă.

Ефимов юлташ ертсе пыракан часть нимĕçсен пехотнăй полкне çапса аркатнă. Тăшманăн 300 салтакĕпе офицерĕ тыткăна парăннă. Тепĕр участокра Н-ски соединенин боецĕсем пĕр кун хушшинче тăшманăн 500 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр Кавказ фронтĕнчи войскăсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, малалла наступлени туса пынă. Н-ски соединенин чаçĕсем пĕр кун хушшинче халăх пурăнакан 6 пункта тытса илнĕ. Нимĕçсем вăйлă тĕреклетнĕ опорнăй пункт патĕнче хаяр çапăçу пулса иртнĕ. Совет боецĕсем фронт енчен пырса çапса, тăшманăн гарнизонне хăйсем патне пырса тăраттарнă. Çав вăхăтра пирĕн ытти подразделенисем айккипе пырса тăшманран иртсе кайнă та ăна флангсенчен тата тылран атакăланă. Нимĕç гарнизонне пĕтĕмпе тенĕ пекех пĕтерсе тăкнă. Боеприпассен, çар хатĕрĕсен тата апатçимĕç склачĕсене тытса илнĕ. Тепĕр участокра Н-ски чаçăн çăмăллăн куçакан отрячĕ тăшманăн тылне пырса тухнă та нимĕçсен артиллери батарейине, 12 пулеметне, 4 минометне тата минăсен складне тытса илнĕ.

* * *

Смоленск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ пĕр эрне хушшинче тăшманăн 5 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. 2 паровоз, 41 вагон тата 13 платформа çĕмĕрĕлнĕ. Чугунçула 950 метр тăршшĕ участокра çĕмĕрнĕ. Смоленск облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ нимĕçсен фронт патнелле пыракан обозне тапăннă. Партизансем бензин тултарнă 8 пичкене çунтарса янă, 23 лаша тата темиçе пин патрон тытса илнĕ.

* * *

[illegible] Воронеж облаçĕнчи Солдатское ялĕнче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр:

«Гитлеровецсем Ленин ячĕпе тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсен мĕнпур тыррине тытса илнĕ, колхозниксене çаратса тухнă, вĕсене выçă вилĕмпе вилмелле туса хăварнă. Фашистла бандитсем таврари ялсенчи çынсене çаратнă та мĕнпур колхозниксене—11.000 çынна яхăн—Солдатское ялне хăваласа пухнă, çав çынсем хушшинче хĕрарăмсемпе ачасем нумай пулнă, вĕсем витесенче, сарайсенче тата землянкăсенче хĕсĕнсе пурăннă. Нимĕçсем çав çынсене выçă усранă, нисăта та кăларман. Пăртак вăхăт иртсен, гитлеровецсем çав асапланса пĕтнĕ, халран кайнă çынсене хĕвеланăçнелле илсе кайнă. Чирлисене тата выçăпа халран кайнисене фашистла ирсĕрсем çул çинчех пере-пере вĕлернĕ. Гитлерла палачсем ялта тыткăна лекнĕ 11 красноармееца çакса вĕлернĕ тата 30 çулхи Ольга Анцуповăна, 25 çулхи Анна Пальчиковăна, 35 çулхи Ольга Поповăна, 70 çулхи Федор Зыкова тата ыттисене те персе вĕлернĕ. Малтан тухса кайнă чухне нимĕçсем обществăллă çуртсене тата колхозниксен 30 çуртне çунтарса янă». Акта И. Золотухин, И. Могнев, М. Попов, ялсовет председателĕ Емельянов алă пуснă.

Февралĕн 3-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳрен

Февралĕн 3-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Кăнтăр-Хĕвеланăç, Кăнтăр, Çурçĕр Кавказ, Кавказ лешъенчи, Воронеж, Ленинград тата Волхов фрончĕсенчи войскăсем малтанхи еннеллех наступленилле çапăçусем туса пынă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче Н-ски соединенин чаçĕсем хаяр çапăçу хыççăн нимĕçсене халăх пурăнакан 3 пунктран хĕссе кăларнă. Тăшман контратака тунă, анчах унăн контратакине пысăк çухатусем тӳстерсе сирсе пăрахнă. Нимĕçсен 6 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем тăшманăн вăйлă тĕреклетнĕ опорнăй пунктне йышăнса илнĕ. 7 пулемет, 4 противотанковăй пăшал, темиçе вуншар автомат тата боеприпассен складне тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем ăнăçлăн наступленилле çапăçусем туса пынă. Н-ски чаçăн боецĕсем танкистсемпе пĕрле çапăçса халăх пурăнакан 3 пункта тытса илнĕ, тăшмана малалла хĕссе пынă. Гвардейски соединенин чаçĕсем вăйлă çапăçусенче нимĕçсем хирĕç тăнине сирсе янă та малалла кайса халăх пурăнакан 10 пункта йышăнса илнĕ. 26 оруди, 30 автомашина, 6 тягач, 3 радиостанци тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Нимĕçсен 60 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Нимĕç пехотине пĕр батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ, 27 оруди, 8 миномет, 21 автомашина пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн летчиксем Ворошиловград çумĕнчи аэродрома тапăннă, нимĕçсен 15 самолетне пĕтерсе тăкнă. Кунсăр пуçне, сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 8 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Воронежран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем малалла тапăнса пынă. Пĕр участокра нимĕçсем контратака тунă. Совет боецĕсем вирлĕн пырса çапса тăшмана каялла чакарнă та халăх пурăнакан 2 пункта тытса илнĕ. Н-ски соединенин чаçĕсем гитлеровецсене халăх пурăнакан 3 пунктран хĕссе кăларнă. Трофейăсем тытса илнĕ, трофейăсем хушшинче 12 оруди, 27 пулемет, 6 миномет, боеприпассем тиенĕ 19 автомашина тата çар пурлăхĕн склачĕ пур.

* * *

Çурçĕр Кавказ фронтĕнчи войскăсем, тăшман хирĕç тăнине сирсе ярса, малалла куçнă. Халăх пурăнакан пĕр пунктшăн пынă çапăçусенче пирĕн боецсем тăшман пехотин икĕ ротине аркатса тăкнă тата 4 танка персе çĕмĕрнĕ. 2 оруди, 8 пулемет, 5 миномет тата минăсен складне тытса илнĕ. Тепĕр участокра гвардеец-кавалеристсем нимĕçсен обозне атакăланă. 20 автомашина тата çар грузĕсем тиенĕ 27 лаша тытса илнĕ.

* * *

Калинин облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕç гарнизонне çĕрле пырса тапăннă, комендатурăна аркатса тăкнă, 26 гитлеровеца вĕлернĕ. Темиçе кун иртсен çав отрядри партизансемех икĕ сехет хушши çапăçса 30 нимĕç салтакне вĕлернĕ. Калинин облаçĕнчи партизансен пĕр ушкăнĕ нимĕçсен çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Пĕр паровоз тата 4 платформа çĕмĕрĕлнĕ. Нумай вагонпа платформа сиенленнĕ.

Йĕлтĕрлĕ кросс пуçланиччен 10 кун юлчĕ

Юлташ, эсĕ старта тухма хатĕр-и?

Комсомолецсемпе профсоюзсен Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа иртекен йĕлтĕрлĕ кросĕ пуçланиччен вунă кун юлчĕ. Пирĕн Чăваш республикинчи комсомолăн чылай организацийĕсем кроса тимлĕн хатĕрленеççĕ. Вăхăт сахал юлчĕ, кашни минута хаклă. Çакна шута илсе çамрăксем йĕлтĕрпе çÿреме хăнăхаççĕ. Республикăри нумай районсенче йĕлтĕрçĕ-боецсем хатĕрлемелли 20 сехетлĕ программăна вĕçлеççĕ. Çав районсем йĕлтĕрлĕ кросăн пĕрремĕш кунĕнчех старт çине çĕршер те пиншер йĕлтĕрçĕсем кăларса тăратма пултараççĕ. Вĕсен шутĕнче — Пăрачкав, Вăрмар, Етĕрне районĕсем. Çак районсенче çĕршер лайăх йĕлтĕрçĕсем, вуншар йĕлтĕр спорчĕн обществăллă инструкторĕсем хатĕрленĕ. Кроса ирттерме судьясен коллегийĕсене туса çирĕплетнĕ, вĕсене инструкцилесе тухнă. Комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксен вăйĕпе йĕлтĕрсем тăвас ĕçе анлăн сарса янă. Етĕрне районĕнче 960 йĕлтĕрçĕ, Шупашкар районĕнче 890 йĕлтĕрçĕ, Пăрачкав районĕнче 598 йĕлтĕрçĕ хатĕрленĕ.

Анчах хăшпĕр районсем йĕлтĕрлĕ кроса сÿрĕккĕн хатĕрленеççĕ-ха. Кувакино районĕнче, сăмахран, паянхи кун тĕлне йĕлтĕр спорчĕн инструкторĕсем мĕнпурĕ те 10 çын çеç хатĕрленĕ. Ишлей районĕнче те йĕлтĕрлĕ кроса хатĕрленес тĕлĕшпе хăшпĕр ĕçсене çеç тунă. Унта йĕлтĕр спорчĕн инструкторĕсем 38 çын хатĕрленĕ. Анчах вĕсем кутаринччĕнех 20 сехетлĕ программа тăрăх йĕлтĕрçĕ-боецсене хатĕрлеме тытăнман. Унта комсомолецсемпе çамрăксен вăйĕпе 65 мăшăр йĕлтĕр çеç хатĕрленĕ.

Çак кунсенче комсомолецсемпе профсоюзсен йĕлтĕрлĕ кросне иртерес тĕлĕшпе ĕçлекен республикăри оргкомитетăн ларăвĕ пулчĕ. Оргкомитет йĕлтĕрлĕ кроса лайăх хатĕрленсе иртерессишĕн Мари АССР-чи çамрăксене ăмăртăва чĕнчĕ. Ăмăрту договорĕнче йĕлтĕрлĕ кроса мĕнпур комсомолецсене, профсоюз членĕсене, шкул ачисене, чугунçул училищисемпе ремесленнăй училищĕсенче, ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсене явăçтарассишĕн кĕрешме обязательство илнĕ. Йĕлтĕрлĕ кроса хутшăнакансенчен 90 проценчĕн БГТО, ГТО пĕрремĕш тата иккĕмĕш сыпăкри значокĕсен нормисене памалла.

Оргкомитет февралĕн 11-мĕшĕпе 12-мĕшĕсенче йĕлтĕрлĕ эстафета иртерме палăртрĕ. Унта кашни районпа хуларан 5-шер йĕлтĕрçĕ хутшăнмалла. Эстафетăн тĕллевĕ — районсемпе хуласем Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа иртекен йĕлтĕрлĕ кроса мĕнле хатĕрленсе çитнине, 20 сехетлĕ программа тăрăх йĕлтĕрçĕ-боецсем мĕн чухлĕ хатĕрленине тĕрĕслесси пулать.

Комсомолецсемпе çамрăксем, йĕлтĕрлĕ кроса лайăх хатĕрленнипе кĕтсе илер, ăна ăнăçлăн иртерер! Çакна тăвас пулсан, комсомол организацийĕсен кашни комсомолец умне çакăн пек задача лартмалла: Юлташ, эсĕ старта тухма хатĕр-и, тренировкăсенче пулнă-и, хăвăн йĕлтĕрÿ пур-и?

Çамрăксем, хамăра тăван çĕршыва хÿтĕлеме хатĕрлер! Пурте йĕлтĕр çине! Мари АССР-чи çамрăксемпе пуçланнă ăмăртура малти вырăна тухассишĕн тата ВЛКСМ Центральный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илессишĕн вăйлăн кĕрешер!

Г. Петрухин,
ВЛКСМ Обкомĕн çарĕç енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Тылри çулăмлă патриот Сабир Гарифуллин

Елчĕк районĕнчи Ишмурзино-Сурара ялсовет исполкомĕн председательне Сабир Гарифуллина пурте хисеплеççĕ, пурте юратаççĕ. Совет влаçĕшĕн, çĕнĕ пурнăçшăн Гарифуллин юлташ хĕрлĕ партизан пулса кĕрешнĕ. Совет влаçĕ пулнă хыççăн та вăл тăшмансемпе кĕрешме чарăнман.

Гарифуллин юлташ ултă çула яхăн ялсовет исполком председателĕн заместителĕ пулса ĕçленĕ. Вырăнти советсене суйланă вăхăтра ял-йышсем ăна ялсовет депутатне суйланă. Ялсовет исполкомĕн пĕрремĕш сессийĕнче Гарифуллин юлташа ялсовет исполкомĕн председательне суйлаççĕ.

Пĕтĕм çĕршыв, пĕтĕм совет халăхĕ тискер фашизма хирĕç кĕрешме çĕкленсен, Гарифуллин юлташ ертсе пыракан ялсоветĕ вăрçă вăхăчĕ хушнă пек ĕçлеме тытăнать. Ишмурзино-Сура ялсовечĕ укçа-тенкĕ обязательствисене яланах вăхăтра е срокчен малтан тултарса пырать. Ялти пĕр çыннăн та государство умĕнче укçа-тенкĕ парăмĕ çук.

Гарифуллин юлташ ертсе пыракан ялсоветĕнчи ĕççыннисем вăрçă вăхăтĕнчи мĕнпур йывăрлăхсене çĕнтерсе, телейлĕ те культурăллă пурнăçшăн кĕрешеççĕ, фронта вăйлăн пулăшса тăраççĕ. Сабир Гарифуллин Хĕрлĕ Çарăн вăй-хăватне ÿстерме хăйĕн хуçалăхĕнчи ытлашши 21 пăт тырра оборона фондне хыврĕ. Кунсăр пуçне вăл танксен колоннине тума 5.000 тенкĕ пачĕ.

Ялсоветĕчи колхозниксем пуян та культурăллă пурнăçпа пурăнаççĕ. Вĕсен нумайĕшĕн велосипедсемпе çĕвĕ çĕлекен машинăсем пур. Кашни колхозникăн тенĕ пекех хăйĕн выльăх-чĕрлĕхĕ пур. Ишмурзино-Сура ялĕнче колхоза кĕмен пĕр хуçалăх та çук. Ялта клуб, туллимар вăтам шкул, акушерсен пункчĕпе трахпункт, почта уйрăмĕ, магазин пур.

Ялсовет исполкомĕн депутачĕ **Г. Гимранова.**

Хĕрлĕ Çар фондне—14.000 пăт тырă

Нимĕç вăрă-хурахĕсене çĕмĕрсе тăкассишĕн Сталин юлташ фронта вăйлăнрах пулăшса тăма чĕннине ответлесе, районри колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне 14.000 пăт тырă хывреç.

Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 200 пăт, «Большевик» колхоз членĕсем—558 пăт, «X лет Октября» колхоз членĕсем 606 пăт, «Красный фронтовик» колхоз членĕсем—1.002 пăт хывнă. Хĕрлĕ Çар фондне тырă хывас ĕç малалла та пырать.

(Хамăр инф.)

АСАИЛ-ХА, ЮЛТАШĂМ!..

Çуралнă çĕршыв çул тавра тăрса
юлчĕ.
Çеçкеллĕ вăрман, чечекленнĕ çаран...
Кашни чĕрĕ çулçă пуç тайрĕ,
ал сулчĕ,
Хаяр вăрçăран çĕнтерсе тухма сунчĕ;
«Эс паттăр пул,—терĕ.—Вĕлер
тăшмана!
Ун юнлă ури ан таптатăр мана».

Çуратнă аннÿ йĕрсе юлнă,
мăнтарăн.
Мухтавлă кăмăл, пархатарлă чĕре!
Аннÿ калани чунна тивнĕ кăварран:
«Хăюллă пул, ывăлăм! Çапăç, ан
парăн!
Ан таттăр тăшман эп вĕçлес ĕмĕре,
Ан чавтăр эсрел эп куç хывнă
çĕре».

Юратнă тусу сана лăпкăн чуптунă,
Инçе вăркăшса юлнă шурă тутри.
Вăл вĕçнĕ, калаçнă: «Ан сивĕнтĕр
чунăр...
Шывра та ан путăр, вутра та ан
çунăр,
Тăшман çеç хăй юнĕ айне путтăр-и!
Ан пултăр хĕр ĕмĕрĕ мăшкăл
хурри».

Мăн Атăл ирхи хĕвелпе ялтăрарĕ.
Пĕр касă çил килчĕ таса Тухăçран.
Хум хыççăн хум чупрĕ, хум
шуххăн шавларĕ,
Пире манăçми витерсе вăл каларĕ:
«Çак тăрă шывра нихăçан, нихăçан
Пÿрленнĕ ÿтне ан çăвайтăр
тăшман»!

Çуратнă çĕршыв çул тавра тăрса
юлчĕ.
Асил-ха, юлташăм, çавна чĕререн.
Тăванăм, ялйышăм, уйхирĕм ал
сулчĕç,
Хаяр вăрçăран çĕнтерсе килме
сунчĕç.
Çĕршывăм, çĕршывăм! Салам
инçетрен!
Сан пек çывăх вырăн çуках
тĕнчере.
. . . .
...Алхаснă тăшман юр çине юн
йĕрлесшĕн:
Кăвар ункăран çăлăнасшăн тарса.
Çуратнă çĕршывшăн, асри
тăвансемшĕн,
Юратнă çулпуçшăн, телейлĕ
кунсемшĕн,
Чăн-чăн паттăрсем пек, пĕр харăс
тăрса,
Кĕрер-ха, юлташăм, мухтавлă вăрçа!

Лейтенант **Александр Алга.**
ДАЙСТВУЮЩИ АРМИ,
1943 ç.

Партипе совет тата колхоз активĕн районри канашлăвĕ

ÇЕМĔРЛЕ. **(Хамăр корр.).** Январĕн 30-мĕшĕнче кунта партипе совет тата колхоз активĕн районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура ялхуçалăх ĕçĕнчи стахановецсемпе стахановкăсем те пулчĕç. Канашлура 1942-мĕш ялхуçалăх çулĕн итогĕсемпе умра тăракан задачăсене сÿтсе-яврĕç. Çак ыйтупа ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн секретарĕ Григорьев юлташ доклад туса пачĕ.

Григорьев юлташ хăйĕн докладĕнче уйрăмах çакна палăртрĕ: районри колхозсем 1942-мĕш ялхуçалăх çулĕнче начар мар ĕçлерĕç. 1941 çулхи ĕçпе танлаштарсан, иртнĕ çулта район çуракине тата тырпулсене уйран пухса кĕртес ĕçсене кĕске вăхăтра ăнăçлăн вĕçлерĕ. Нумай колхозсем хăйсен ĕçне вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек лайăх туса пычĕç. Район иртнĕ çулта çуракине 8 кун хушшинче вĕçлерĕ, акмалли çĕр лаптăкне 15 процент ÿстерчĕ. Уйрăм колхозсем ĕç дисциплинине çирĕплетсе, социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пынă май тырпулсене питĕ кĕске срокра пухса кĕртрĕç. Ворошилов ячĕпе тăракан, «Молодая сила» колхозсем, тĕслĕхрен, уйхирти тырăсене 5 талăк хушшинче вырса пухнă. Тырпулсене пухса кĕртес ĕçре комбайнерсем колхозниксене пример кăтартса ĕçлерĕç.

Малалла Григорьев юлташ колхозсен ĕçĕнче пулнă çитменлĕхсем çинче чарăнса тăчĕ. Çитменлĕхсенчен пĕри вăл районри колхозсем тырпулăн тухăçлăхне ÿстерес енĕпе çителĕксĕр ĕçлени пулчĕ. 1942 çулта тырăсен вăтам тухăçлăхĕ 8 центнер пулчĕ. Уйрăм колхозсем ку енĕпе те çитĕнÿсем тунă. Ворошилов ячĕпе тăракан, «Вперед», «Молодая сила», Ленин ячĕпе тăракан тата ытти хăшпĕр колхозсем тĕштырăсене гектартан вăтам шутпа 13—17-шер центнер туса илчĕç.

Районри колхозсем выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстерес тĕлĕшпе начар мар ĕçлерĕç. Государство планне пур выльăхсем енĕпе те тултарнă. Çулталăк хушшинче ĕнесен хисепĕ 613 пуç, сурăхсен хисепĕ 1.205 пуç ÿснĕ. «Новая жизнь», Ленин ячĕпе тăракан колхозсем выльăхсен хисепне икĕ хут ÿстернĕ. Уйрăм колхозсем выльăх-чĕрлĕхĕн тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе те паха çитĕнÿсем тунă. «Красноармеец» колхозра доярка Коннова юлташ хăйне çирĕплетсе панă ĕнесенчен 9.346 литр вырăнне 12.218 литр сĕт суса илнĕ.

Докладчик иртнĕ çул тунă ĕçсем çинчен калана хыççăн колхозсем умĕнче халь тăракан задачăсем çинче чарăнса тăчĕ. Калас пулать, çуракине хатĕрленес ĕçе пур колхозсем те кирлĕ пек туса пымаççĕ-ха. «Красный Атмал», «Красноармеец», Буденный ячĕпе тăракан тата «Искра» колхозсем халĕ те вăрлăх фондне хывса çитермен, ялхуçалăх инвентарьне юсама тытăнман.

Районра вырăнти удобренисем хатĕрлес ĕç те çителĕксĕр пулса пырать-ха. Январь уйăхĕнче районри колхозсем уя 90 пин лав тислĕк, 36 пин лав торф кăлармаллаччĕ тата кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухмаллаччĕ. Анчах уйăх планне пурĕ те çуррине çеç пурнăçланă. Минераллă удобренисем турттарма, уйра юр тытма пачах пуçламан.

Пренире тухса калаçакансем юлса пыракан колхозсен ĕçне хытă критикăларĕç, ĕçе япăх ертсе пыракан председательсене питлерĕç. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Ежов, «Ударник» колхоз председателĕ Клочков юлташсем канашлăва хăйсен колхозĕсем çуракине тухма хатĕрленсе çитни çинчен, Хĕрлĕ Çар кунне паха ĕçсемпе паллă тума хатĕрленни çинчен каласа пачĕç.

Канашлу, 1943 ялхуçалăх çулĕнче çĕнĕ çитĕнÿсем тума чĕнсе, колхозниксемпе колхозницăсем патне çыру çырчĕ, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозниксене ăмăртăва чĕнчĕ.

Х. Лисин.

Ют çĕршывсенче

„Нимĕçсем Сталинград патĕнче питех те пысăк катастрофа тÿсрĕç“

Англири пичет Хĕрлĕ Çарăн çитĕнĕвĕсем çинчен

ЛОНДОН, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Нимĕçсен Сталинград патĕнче çавăрса илнĕ фашистла войскисене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкни пысăк вырăн йышăнса тăнине Англири пичет уйрăмăнах палăртать. «Дейли мейл» хаçат: çав войскăсене пĕтернипе кăçалхи кампанин пысăк тапхăрĕ вĕçленет, тесе çырать. Германи войскисене Сталинград патĕнче çавăрса илсе пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе туса иртернĕ операци стратегипе мораль тĕлĕшĕнчен çав тери пысăк вырăн йышăнса тăрать. Хаçат çавăн пекех Германи войскисем умне Çурçĕр Кавказра та пысăк хăрушлăх тухса тăнине палăртать.

«Дейли экспресс» хаçатăн çар ĕçĕсене пăхса тăраканĕ Моралей Ричардо çапла çырать: «Генерал-фельдмаршал Паулюса тыткăна илнĕ, нимĕçсен 6-мĕш армийĕнчен асăмĕ кăна тăрса юлчĕ. Нимĕçсен 330.000 çынлă группировкине Сталинград патĕнче çавăрса илсе пĕтерсе тăкни—нимĕçсем вăрçăра çав тери пысăк катастрофа тÿснине пĕлтерет. Германин 6-мĕш армийĕ танатана кĕрсе ÿкрĕ. Вырăссем малтан çав арми хĕссе пынине питех те ăстан чарса тăчĕç, кайран вара çавăрса илчĕç. Сталинграда тытса илме хăтланса, Гитлер тата тепĕр пысăк йăнăш турĕ. Хăйĕн ятне сыхласа хăварас тесе, Гитлер хăйĕн войскисене Сталинград патĕнчен май пур чухне вăхăтра илсе тухма шутламарĕ. Гитлер çав войскăсене хăйĕн ятне тытса тăрас тесе пĕтерттерчĕ. Германин группировкине Сталинград патĕнче пĕтерсе тăкни Гитлерăн вăрçă тĕлĕшĕнчи тăмсайла ăсне палăртакан классикăллă самант пулса тăрать».

„Сталинграда хÿтĕлени—пирĕн саманари историн чи геройла сыпăкĕ пулса тăрать“

Турцири пичет Хĕрлĕ Çарăн çапăçури çитĕнĕвĕсем çинчен

СТАМБУЛ, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Турци хаçачĕсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтран килекен пĕлтерÿсене, малтанхи пекех, пысăк вырăна хураççĕ тата нимĕçсен войскисене Сталинград патĕнче çавăрса илсе пĕтерсе тăкнине уйрăмах палăртса çыраççĕ.

Сари Эртем «Вакыт» хаçатра çапла çырать: «Сталинграда хÿтĕлени — пирĕн саманари историн чи геройла сыпăкĕ пулса тăрать. Çав хулана хÿтĕлекенсене этемлĕх историйĕ яланах, геройсене асра тытнă пек, асра тытĕ. Сталинград нимĕçсем хĕснине тÿссе ирттерчĕ, çакă вара Германин мĕнпур стратегиллĕ планĕсем путланса парассипатне тата Германи войскисем поражени тÿсесси патне илсе çитернĕ».

«Ени сабах» редакторĕ Ялчин: Германи çарĕсем çак хĕлте «канăç кураймарĕç», — тесе çырать. — Çакă вăл нимĕçсене шиклентерет. Германи çарĕнче салтаксем ывăнса, халран кайса çитни ытларах та ытларах палăрать. Хăюллăнах çакăн пек ыйту пама пулать, — тесе çырать автор, — вырăссен хĕллехи икĕ уйăх хушшинчи наступленине пула нимĕçсем çав тери хăрушла çухатусем тÿснине мĕнпе витме пултарĕç-ха? Ывăнни тата халран кайни мĕне пĕлтернине нимĕçсем çак хĕлте пĕтĕмĕшпех ăнланса илчĕç. Паянтан ĕнтĕ Германишĕн вăрçăн наступлениллĕ тапхăрĕ пĕтсе ларчĕ.

Черчилль Турцин государство деятелĕсемпе калаçни

ЛОНДОН, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Паян каçхине Англин информаци министерстви çакăн пек пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă:

«Премьер-министр Уинстон Черчилль Турцин государство деятелĕсемпе калаçнă. Турци деятелĕсемпе Англи деятелĕсем хушшинче темиçе калаçу пулса иртнĕ. Çав калаçусенче Турци енчен министрсен совечĕн председателĕ Шюкрю Сараджоглу, генеральнăй штабăн начальникĕ маршал Февзи Чакмак, ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Нуан Менемеджиоглу, Турцин çар авиацийĕн командующийĕ Феридун Эркин, генеральнăй штабăн оперативнăй отделĕн начальникĕ полковник Фазин Кайабали пулнă; Великобритани енчен—премьер-министр Уинстон Черчилль, Великобританин Турцири посолĕ Нэчбелл Хьюгессон, ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕн яланхи заместителĕ сэр Кадоган, империн генеральнăй штабĕн начальникĕ генерал Аллан Брук, Иранпа Ирак çар округĕн командующийĕ генерал Вильсон, Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйсен командующийĕ генерал Гарольд Александер, Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи администраци руководителĕ генерал-лейтенант Линдселл, Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи сывлăш-çар вăйĕсен начальникĕн заместителĕ — авиаци маршалĕ Дрэммонд, Вăтаçĕр тинĕсри çар операцисен главнокомандующийĕ çумĕнчи штабăн начальникĕ Коммодор Дандес пулнă.

Тĕл пулса чĕререн калаçнă чухне Турципе Пĕрлешÿллĕ Королевство хушшинче туслă çыхăну тата пĕрпĕрне ăнланни пуррине палăртнă, вĕсене тата ытларах тĕреклетнĕ. Турцин государство деятелĕсем çав юлашки хăрушă çулсенче Турци мĕнле политикăна пурнăçласа пыни çинчен каласа панă, премьер-министр вара вĕсене çапла шантарса калама пултарнă: унăн величествин правительстви Турци пурнăçласа пынă политикăна ăшă кăмăлпа тата ăнланса сăнаса пынă, тенĕ. Турципе Англин государство деятелĕсем Европăра, уйрăмах та Турцие хăйне интереслентерекен районсенче хальхи вăхăтра лару-тăру мĕнле тăнине пĕрле пăхса тухнă. Икĕ çĕршывăн деятелĕсем пур тĕп ыйтусем çине те пĕр пек пăхни палăрнă.

Великобританипе Пĕрлешÿллĕ Штатсем Турцин хăрушсăрлăхне çирĕплетме ăна мĕнле материальнăй пулăшу парасси пирки калаçса татăлнă. Çак ыйтупа Турципе Англин çар советникĕсем хушшинче те калаçусем пулса иртнĕ. Премьер-министр, Пĕрлешÿллĕ Штатсен Президенчĕпе нумаях пулмасть канашланăскер, çак калаçура президент Рузвельтăн позицийĕ лайăх пĕлсе, шута илсе калаçма пултарнă; Рузвельт вăл çак калаçăва иртерме сĕннине ăшă кăмăлпа ырланă. Калаçура вăрçă хыççăнхи ыйтусем çинчен те калаçнă, вĕсен тĕлĕшпе те калаçса татăлнă.

Аданра январĕн 30-мĕшĕпе 31-мĕшĕнче пулса иртнĕ çак калаçусем хыççăн Турципе Англин государство деятелĕсем çав калаçу вĕсене кăмăла кайни çинчен каласа панă».

РУЗВЕЛЬТ ХЭЛЛПА ТАТА ПОЛИТИКĂЛЛА ПАРТИСЕН ЛИДЕРĔСЕМПЕ КАНАШЛАНĂ

ВАШИНГТОН, февралĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Шурă Çурт çапла пĕлтернĕ: Рузвельт государственнăй секретарьпе Хэллпа тата демократиллĕ партипе республикăлла партин Конгрессри лидерĕсемпе канашланă, вăл Касабланкăра Черчилльпе тĕл пулса калаçнă ыйтусем пирки канашланă.

Çурçĕр Африкăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри вăйĕсен штабĕн черетлĕ коммюникинче çапла пĕлтернĕ: Тунисăн вăтаçĕрĕнчи пайĕнче тăшманпа пысăк мар тытăçусем пулса иртнĕ. Союзниксен бомбардировщикĕсем январĕн 31-мĕшĕнче Бизертăри доксене çĕнĕрен атакăланă. Кăнтăр Тунисра тăшман, танксем пулăшса тăнипе, çĕнĕрен атакăсем пуçласа янă.

Рейтер агентствин союзниксен Çурçĕр Африкăри штабĕ çумĕнчи специальнăй корреспонденчĕ: январĕн 28-мĕшĕнче союзниксен самолечĕсем тĕнĕл держависен 7 суднине спецлесе, тесе пĕлтерне.

—⊙—

Пĕлтерÿ

Февралĕн 5-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Парткабинетăн лекцисем вуламалли залĕнче (Чувашская ур., 6) агитаторсем валли лекци пулать. Лекци теми: **«Сталин — Хĕрлĕ Çарăн тата халăхăн çулпуçĕ».**

Лекцие лектор **А. А. Рассудов** вулать.

ВКП(б) Горкомĕн Парткабинечĕ.

ФРОНТОВИКСЕН ÇЫРĂВĔСЕМ

1. Тăван халăхпа мухтанатăп

Хаçатран эпир пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, трактористсемпе трактористкăсем танксен хăватлă колоннисене тума нумай миллионшар укçа-тенкĕ пухни çинчен пĕлтĕмĕр. Çакă патриотла пысăк ĕçшĕн республикăри ĕççыннисене аслă çулпуç Сталин саламланине вуласа тухрăмăр. Пирĕн, фронтри боецсен, чĕресем питĕ савăнчĕç, шухăш-кăмăл ÿсрĕ. Тăван халăхăн ячĕпе мухтанас килет.

Совет Союзĕнчи ытти мĕнпур халăхсемпе пĕрлех чăваш халăхĕ те фронта, Сталин юлташ ыйтнă пек, ĕçлĕн те активлăн пулăшса тăрать. Вăл çапла майпа хăйĕн колхозри ирĕклĕ те телейлĕ, пуян пурнăçне хÿтĕлет.

Орденлă Чăваш республики мĕнле ĕçленине, тăван республикăри фабрикăсемпе заводсем, колхозсем тăван çĕршыва мĕнле вăй парса пынине эпир, фронтовиксем, куллен сăнаса тăратпăр. Кашни çĕнĕ хыпара илтсен, чĕре хаваслă туйăмпа вĕреме тытăнать.

Эпир, Хĕрлĕ Çарăн воинĕсем, хамăрăн тăван халăха тивĕçлĕ пулма тăрăшăпăр, эпир тăван халăхăн ятне ÿкермĕпĕр. Эпир хамăрăн мирлĕ хуласемпе ялсене ирĕклĕ те телейлĕ пурнăçа çĕнĕрен таварса парăпăр. Хĕрÿллĕнрех ĕçлĕр, колхозниксем! Сире пирĕншĕн хĕрелме лекмĕ. Сĕмсĕр те ирсĕр нимĕç оккупанчĕсене эпир часах çапса аркатăпăр.

Фронтран хĕрÿллĕ салампа
Ф. Ермаков.
(Советски районри Уйкас-Асламасран).

2. Манăн хĕçпăшал шанчăклă

Аслă Нарком Сталин юлташ иртнĕ çулхи Октябрь уявĕнче тунă доклада тата вăл панă приказа вуласа тухнă хыççăн эпĕ хам çине çар ĕçне вĕренсе хатĕрленес енĕпе пысăк обязательствăсем илнĕччĕ. Çав обязательствăсене эпĕ ĕнтĕ чыслăн пурнăçа кĕртрĕм. Эпĕ винтовкăран тĕл перетĕп, ручной гранатăна ăста ыватăтап, ручной пулемета та лайăх пĕлетĕп. Çавăн пекех манăн тактика енĕпе те çитĕнÿсем пĕчĕккĕ мар. Хамăрăн командир мана яланах лайăх енĕпе палăртса палана. Эпĕ пур дисциплинăпа та экзамен тытрăм. Кунсăр пуçне тата хамăн юлташсене пулăшрăм.

Эпĕ çапăçăва тухма хатĕр. Манăн хĕçпăшал шанчăклă. Эпĕ çав хĕçпăшалпа хамăн тăван çĕршывăн тăшманĕсене хирĕç — нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç хаяррăн çапăçма, вĕсене пуçĕпех сăк обязательствăсем илнĕччĕ. Çав сăмах манăн эпĕ çапăçу хирне тухиччен тăван халăх умĕнче тупа туса каланă сăмах пултăр.

Кĕçĕн сержант А. Куприянов.

3. Ывăлĕн çырăвĕ

Писменосец Ксения Аршуткинăна кăвак конвертлă çыру килсе парчĕ. Çырăва илсен ватă колхозница вăл камран килнине пĕлес тесе чылайччен пăхса тăчĕ. Хăй вулама пĕлмен пирки вăл кÿрше тухса кайрĕ. Шкул ачи çырăва часах вуласа пачĕ. Унта нумаях та çырман, анчах тăван ывăлĕн сăмахĕсем амăшне савăнтарчĕç, хумхантарса ячĕç.

«Сывă пурăнатăн-и, юратнă анне! — тесе çырать ывăлĕ. — Эпĕ, санăн фронтри ывăлу — Ваня, сана хамăн пурнăç çинчен çырса пĕлтерес терĕм. Эпĕ аслă çапăçу хирĕнче нимĕç фашисчĕсене тăван çĕршывран тасатассишĕн кĕрешетĕп. Пирĕн Хĕрлĕ Çар тăшмана хăватлăн тапăнса пырать. Нимĕçсем пиншерĕн хăйсен вилĕмĕсене тупрĕç. Эпир часах тăшмана çапса аркатса киле çĕнтерÿпе таврăнăпăр. Эпĕ ытлашши нимĕнех те туман. Командованин приказне çеç тÿрĕ кăмăлпа та чыслăн пурнăçа кĕртсе пынă. Çав приказсене пурнăçа кĕртнĕ чухне тĕл пулакан йывăрлăхсене сирсе пăрахнă, ирсĕр нимĕçсене сахал мар леш тĕнчене ăсатнă. Çак ĕçсемшĕн мана Командовани халĕ Правительствăн иккĕмĕш наградине илме тăратрĕ. Эпĕ çав наградăсене тивĕçлĕ пулма тăрăшăп.

Санăн ывăлу-медаленосец
Иван Аршуткин».

58 çулхи Ксения Аршуткина чăтайман, унăн куçĕсенчен савăнăç куççулĕ юхса аннă. Вăл хăйĕн ывăлĕ совет халăхне юрăхлă пулнишĕн, награда илме тивĕçлĕ пулнишĕн хĕпĕртенĕ. Хăй те вăл колхозра яланах фронтри ывăлне асра тытса ĕçленĕ. Ватă пулсан та, вăл иртнĕ çул 130 ĕçкунĕ ытла ĕçлесе илнĕ. Тÿрĕ кăмăллă ĕçре перекетлесе хăварнă хăйĕн укçи-тенкинчен танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 500 тенкĕ панă.

Халĕ вăл хăйĕн тăван ывăлĕ хăй пекех хастарлă пулнишĕн савăнать. Çара кайиччен Иван Аршуткин Калинински районри Мăн-Явăш ялĕнче пурăннă. Колхозри чи активлă комсомолец-стахановец пулнă. Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпах вăл артиллери чаçĕнче тăрать. Нимĕç оккупанчĕсене хирĕç хастаррăн кĕрешет. Çапăçура хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Совет Правительстви ăна «За отвагу» медальпе наградăланă. Çакăнпа хавхаланса, вăл çĕршывăн тăшманĕсене хирĕç татах та хастаррăн çапăçнă Сталинград хулине хÿтĕленĕ. Аманнă пулин те, вăл çапăçу хирĕнчен нумай вăхăта мар тухать. Халĕ ăна Командовани Правительствăн пысăкрах наградине илме тăратнă. Çапла совет патриочĕсем — амăшĕпе ывăлĕ, пĕри — тылра, тепри — çапăçу хирĕнче тăван çĕршывăн аслă чыслăхне хÿтĕлеççĕ.

И. Федингин.

Отвeтлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Тури Атăл пароходствин Шупашкар пристанĕ 1943 çулхи навигацире суднăсем çинче ĕçлеме çакăн пек квалификациллĕ ĕç вăйне пухать: масленщиксене, кочегарсене, матроссене. Матроссене пароходсем çÿреме тытăначчен ятарласа уçнă курсран вĕрентсе кăлараççĕ. Пур ĕçсем тĕлĕшпе те çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Аптечная, 7, кадрсен отделĕ.

Пристань.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1229

Типографи №, Управлени полиграф промышленноçти при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 96. 84 п.